25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАЙ 26 ЫТЛАРИКУН 120 (6055) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

32, 238, 328-мĕш стрелковăй дивизисенчен тата артиллерин 882-мĕш полкĕнчен Гвардейски чаçсем тăвасси çинчен

Тăван çĕршывăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă тата организованно пулнăшăн, чаçсен личнăй составĕ çапăçусенче геройлăх кăтартнăшăн çак чаçсенчен Гвардейски чаçсем тунă:

1) 32-мĕш стрелковăй дивизирен — 29-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи —дивизи командирĕ полковник **С. Т. Гладышев.**

2) 238-мĕш стрелковăй дивизирен — 30-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи —дивизи командирĕ полковник **Г. П. Коротков.**

3) 328-мĕш стрелковăй дивизирен — 31-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи —дивизи командирĕ полковник **П. А. Еремин.**

4) Артиллерин 882-мĕш полкĕнчен — артиллерин 71-мĕш Гвардейски полкĕ —полк командирĕ полковник **В. П. Хитровский.**

Асăннă чаçсене Гварди ялавĕсем параççĕ.

Чугунçулсен, движенипе паровоз хуçалăхĕн отделенийĕсен, станцисен, паровоз деповĕсен, вагон участокĕсен, çулйĕрпе çыхăну дистанцийĕсен, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн завочĕсен социализмлă ăмăртăвĕн УСЛОВИЙĔСЕМ

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ чугунçул транспортĕнче ĕçĕн çĕнĕ çĕкленĕвне пуçарса ячĕ. Железнодорожниксем тĕплĕн, йĕркеллĕн, пысăк тухăçлăхпа ĕçлес, 1942 çулта нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас кăмăлпа çунаççĕ.

Ленински чугунçулăн Мускав узелĕнчи рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем Совет Союзĕнчи мĕнпур железнодорожниксене чугунçулсен, движенипе паровоз хуçалăхĕн отделенийĕсен, станцисен, паровоз деповĕсен, вагон участокĕсен, çулйĕрпе çыхăну дистанцийĕсен, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн завочĕсен социализмлă ăмăртăвне организацилеме чĕнсе каларĕç, поездсене хăвăрт çӳретессишĕн, фронтпа тыла кирлĕ япаласене вăхăтра тăратассишĕн, вăрçă вăхăтĕнче таварсем турттарса çӳрес тĕлĕшпе государство панă заданисене пĕтĕмпех тата ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешме чĕнчĕç.

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ Ленински чугунçулăн Мускав узелĕнчи работниксен пуçарăвне ырласа, ăмăртăвăн çакăн пек условийĕсене пĕлтереççĕ:

Чугунçулсем енĕпе

Поездсене йышăнса кăларса ярас плана тултарнă, поездсене график тăрăх ăсатса янă, пушă вагонсене ăсатас тĕлĕшпе тата тиес тĕлĕшпе государство планне тултарнă, пушатас тĕлĕшпе задание ирттерсе тултарнă тата çар поезчĕсене кăтартнă хăвăртлăхран кая мар хăвăртлăхпа çӳретнĕ çулсем ăмăртура мала тухнă çулсем тесе шутланаççĕ.

Движени отделенийĕсем енĕпе

Поездсене йышăнас тата ăсатас плана тултарнă, поездсене график тăрăх ăсатса çӳретнĕ, пушă вагонсене ăсатас тĕлĕшпе задание тултарнă, тиес тĕлĕшпе государство планне тултарнă тата пушатас енĕпе задание ирттерсе тултарнă движени отделенийĕсем ăмăртура мала тухнă отделенисем тесе шутланаççĕ.

Станцисем енĕпе

Поездсене йĕркелес плана килĕштерсе, поездсене график тăрăх ăсатса тăрас плана пĕтĕмĕшпех пурнăçланă тата вагонсен простойне чакарнă, тиес плана тултарнă тата пушатас тĕлĕшпе заданисене ирттерсе тултарнă станцисем ăмăртура мала тухнă станцисем тесе шутланаççĕ.

Паровоз хуçалăхĕн отделенийĕсем енĕпе

Паровозсене график тăрăх ĕçлеттернĕ, паровозсем таврăнса çӳремелли вăтам нормăна тултарнă, топливăна 10 процентран кая мар перекетленĕ паровоз хуçалăхĕн отделенийĕсем ăмăртура мала тухнă отделенисем тесе шутланаççĕ.

Паровоз деповĕсем енĕпе

Ĕçри лунинла методсемпе усă курса паровозсене культурăллă тытса тăнă тата вĕсене техника енĕпе юсавлă тытса тăнă, подъемочнăй ремонт планне тултарнă, çав ремонтра паровозсем пулмалли нормăна чакарнă, паровоза ремонта кĕртиччен çӳремелли нормăна тултарнă тата паровоза вăхăтсăр ремонта кĕртмен паровоз деповĕсем ăмăртура мала тухнă депосем тесе шутланаççĕ.

Вагон участокĕсем енĕпе

Поездсене тытса тăмасăр вагонсене пысăк пахалăхпа тĕрĕслесе юсанă, вăтам ремонт планне, вагонсене тĕрĕслемелли çулталăкри плана тултарнă тата поездсем çӳренĕ вăхăтра вагонсене çул çинче буксăсем çуннă пирки ремонта тăратни пулман вагон участокĕсем ăмăртура мала тухнă участоксем тесе шутланаççĕ.

Çулйĕр дистанцийĕсем енĕпе

Çулйĕре отлично тытса усранă тата поездсене палăртнă хăвăртлăхпа пĕр чăрмавсăр ирттерсе ярассине ĕçе кĕртнĕ, вырăнти ресурсемпе туллин усă курса, çулйĕрсене юсас плана пурнăçа кĕртнĕ çулйĕр дистанцийĕсем ăмăртура мала тухнă дистанцисем тесе шутланаççĕ.

Çыхăну дистанцийĕсем енĕпе

Сигнализаци устройствисене кăтартуллă ĕçлеттернĕ тата поездсене пĕр чăрмавсăр ирттерсе ярассине ĕçе кĕртнĕ çыхăну дистанцийĕсем ăмăртура мала тухнă дистанцисем тесе шутланаççĕ.

Заводсем енĕпе

Паровозсем, вагонсем юсас плана пурнăçа кĕртнĕ тата планран ирттерсе фронт валли запас чаçĕсемпе продукци туса кăларнă заводсем ăмăртура мала тухнă заводсем тесе шутланаççĕ.

Ăмăртура мала тухнă чугунçулсене, движенипе паровоз хуçалăхĕн отделенийĕсене, станцисене, паровоз деповĕсене, вагон участокĕсене, çулйĕрпе çыхăну дистанцийĕсене, НКПС завочĕсене Государствăн Оборона Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне памалла тăваççĕ.

Кунсăр пуçне, ăмăртура мала тухнă ытти коллективсене Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавĕсене памалла тăваççĕ.

Ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă рабочисене тата инженерсемпе техниксене «хисеплĕ железнодорожник» тата «сталинла призывăн ударникĕ» ятлă значоксем парса наградăлама тăратаççĕ.

1942 çулти май уйăхĕнчен пуçласа ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ кашни уйăхрах ăмăрту итогне тăваççĕ те «Правда», «Гудок» хаçатсенче тата чугунçул çинчи ытти хаçатсенче пичетлесе кăлараççĕ.

Государствăн Оборона Комитечĕн ялавне ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ тăратнипе Государствăн Оборона Комитечĕ парать.

Союзăн чугунçулĕсем çинче лайăх паровозшăн, лайăх бригадăшăн, лайăх цехшăн, лайăх сменăшăн социализмлă ăмăрту пулса пымалла.

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ чугунçулсен хуçалăх тата политикăллă руководителĕсене, профсоюз тата общественăллă организацийĕсене мĕнпур вăй-хала хурса ĕçлесе транспортăн ĕçне вăйлатса çĕклентерес тата фронтпа халăх хуçалăхĕ ыйтнисене тивĕçтерме поездсене хăвăрт çӳретмелле тăвас тĕлĕшпе Государствăн Оборона Комитечĕн Хĕрлĕ ялавĕшĕн пыракан ăмăртăва ертсе пыма чĕнеççĕ.

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ Ленин—Сталин партийĕ тавра тачă пĕрлешнĕ железнодорожниксем ĕç çинче коммунистла пăхнин çĕнĕ образецĕсене кăтартассине тата 1942 çулта нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла çарне пĕтĕмпех аркатса тăкма пурнăçа кĕртессине те тăвассине шанса тăраççĕ.

ПРОФСОЮЗСЕН ПĔТĔМ СОЮЗРИ ЦЕНТРАЛЬНЫЙ СОВЕЧĔ.

СССР ÇУЛЙĔР ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 24-мĕшĕнче Харьков енче пирĕн войскăсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, малалла куçнă.

Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăллă хаяр çапăçусем туса пынă. Çав çапăçусенче нимĕçсен фашистла войскисене пысăк çухатусем кӳнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

Майăн 23-мĕшĕнче нимĕçсен 24 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 35 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 175 автомашинине, 18 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 15 точкине, 18 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи составра тата боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче пирĕн часть нимĕçсен атакине сирсе янă та, малалла куçса, халăх пурăнакан пилĕ кирлĕ пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 ытла вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра стрелковăй подразделени боецĕсем, Лавров юлташ командир пулса ертсе пынипе, противникăн контратакине сирсе пăрахнă, çав çапăçура противника пысăк çухатусем кӳнĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 3 оруди, 2 миномет, 6 станковăй пулемет, 180 винтовка, танксене хирĕç пемелли 2 пăшал тата 2 радиостанци.

* * *

Изюм—Барвенково енче кĕрешекен пирĕн танковăй часть 2 кун хушшинчи çапăçусенче противникăн 40 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фроловпа Телков юлташсен подразделенийĕсем (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) юханшыв урлă каçнă та нимĕçсен оборони ăшне сăвăрланса кĕнĕ. Контратака тума хăтланнă гитлеровецсен ротине пирĕн боецсем пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн боецсем виçĕ кун хушшинче пăшалсемпе пулеметсенчен персе нимĕçсен 5 самолетне ӳкернĕ. Лейтенантăн Матонин юлташăн боецĕсен ушкăнĕ 2 самолет персе антарнă. Сержант Матицын пĕр самолет персе ӳкернĕ, Вывоздцевпа Стовбуха красноармеецсем 2 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн пĕр чаçăн наступленийĕ вăхăтĕнче (Ленинград фрончĕ) Григорий Б. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ, нимĕçсен тылĕнче кĕрешекенскер, чугунçул линине сирпĕнтерсе янă та нимĕçсен çапăçу хирне васкакан бронепоезчĕн çулне картласа лартнă.

* * *

Пирĕн чаçсем тытса илнĕ документсем хушшинче нимĕçсен 296-мĕш пехотнăй дивизийĕн 519-мĕш полкĕнчи 9-мĕш рота командирĕ батальон командирĕ патне çырнă çырăва тупнă. Çав çырура рота командирĕ çапла çырать: «Ротăна панă пополненири салтаксем нумайĕшĕ ...винтовкăна тыткалама та пĕлмеççĕ. Çавăн пекех вĕсем пехотăри ытти хĕçпăшалсене те: ручной гранатăна, гранатомета тата танксене хирĕç пемелли пăшалсене те мĕнле тыткаламаллине пĕлмеççĕ».

* * *

Аяларахра Лейпциг хуличе пурăнакан Эдит Герман патне яма нимĕç салтакĕ Франц Будер çырса хатĕрленĕ çырурăн илнĕ уйрăм вырăнсене пичетлетпĕр: «...Вырăссем пирĕн çине çил-тăвăл пек хăвăрт çĕмĕрсе кĕреççĕ. Виçĕ кун хушшинче эпир пачах та куç хупса курман, пĕрре те ларса канман. Тăшман пирĕн позицисем çине артиллерирен перет. Унăн самолечĕсем пирĕн позицисем çине бомбăсем тăкаççĕ. Эпир пысăк çухатусем тӳсетпĕр. Эпир тахçантанпах ĕнтĕ пĕр канусăр çапăçатпăр, пире сывлăш çавăрма та вăхăт памаççĕ. Нимĕнле нервсем те чăтса тăма пултарас çук. Килте пурăнакансем пĕр çын та Российăпа вăрçни мĕн иккенне пĕлме пултараймаççĕ. Киносенче кăтартни вăл — кунта мĕн пулса пыни мар... Вырăс çыннисен паттăрлăхĕпе вĕсем нимрен те хăраманнинчен эпир тĕлĕнсе каятпăр. Вĕсем тĕнчене тĕлĕнтерекен ĕçсем тăваççĕ. Çапла, вырăссем чăнах та нимĕнрен те хăрама пĕлмеççĕ...»

* * *

Курск облаçĕнчи Архангельски ялĕ 6 уйăх ытла нимĕç захватчикĕсен аллинче тăнă. Гитлеровецсем колхоза аркатса тăкнă, пуян пурнăçпа савăнса пурăнакан ялтан ишĕлчĕк кути кăна хăварнă. Кунти шкула, сыснасен фермине, ăратлă лашасен кăтартуллă витине, тырă усрамалли пысăк кĕлетсене тата колхозăн ытти çуртйĕрĕсене те çав бандитсем пĕтĕмпех çунтарса янă. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Веронин врачпа унăн арăмне, сахăр завочĕн мастерне Мошенкăна çакса вĕлернĕ, колхозниксене — Кушнарева, Верещагина, Шаповаловăна, Северниковăна тата ялти ытти граждансене нумайĕшне персе пăрахнă. Аманнă хыççăн тыткăна лекнĕ 10 красноармееца асаплантарса вĕлернĕ. Нимĕçсем çав ялта çаратса тухман пĕр килçурт та хăварман, унти халăхăн пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхне, продовольствине, тумтирне, кĕпе-йĕме, килти хатĕрсене йăлтах туртса илнĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем пыра-пыра çапнипе ялтан тухса тарма вăхăт çитсен, гитлеровецсем колхозниксен 60 килçуртне ытла çунтарса янă.

Майăн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Харьков енче пирĕн войскăсем, йышăнса илнĕ рубежсене çирĕплетсе, наступленилле çапăçусем туса пынă.

Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче нимĕçсен пехоти, пысăк çухатусем тӳсе, совет войскисем вырнаçса тăнă вырăна савăлланса кĕме пултарнă. Флангсенчен пыра-пыра çапса, пирĕн боецсем противника каялла хăваласа янă, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Гитлеровецсен 750 çын вилсе юлнă. Пирĕннисем танка хирĕç пемелли 5 оруди, 11 станковăй пулемет, шултра калибрлă 3 пулемет, 2 миномет тата винтовкăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Изюм—Барвенково енче кĕрешекен пирĕн часть противникăн пехотипе танкĕсен хаяр атакине сирсе пăрахнă. Нимĕçсем пысăк çухатусем тунă. Пирĕн боецсем противникăн 8 танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противникăн икĕ батальонĕ 5 танк пулăшнипе пирĕн чаçа атакăланă. Вăйлă çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă, 300 яхăн гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн часть нимĕçсене халăх пурăнакан В. пунктĕнчен хĕссе кăларнă та халĕ малалла куçса пырать. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем çав çапăçура 400 çын вилсе юлнă. Тăшманăн 11 дзотне, 5 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă, боеприпассем хунă 2 склада сирпĕнтерсе янă.

* * *

Старши лейтенантăн Валкин юлташăн зенитнăй батарейи 6 кун хушшинче нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансен Ш. юлташ ертсе пыракан отрячĕ чугунçул çинчи кĕпере сирпĕнтернĕ те противникăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 121-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 408-мĕш полкăн 1-мĕш батальонĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Петер Росс çапла каласа панă: «Командовани пирĕн батальона полици «СС» дивизине пулăшма ячĕ. Каçхине совет танкĕсем пирĕн çирĕплетнĕ вырăнсене шăтарса кĕчĕç, танксем хыççăн пыракан пехота атака пуçласа ячĕ. Пирĕн батальон çавтери пысăк çухатусем тӳссе каялла чакрĕ. Пирĕн батальонра вăрçă хăçан пĕтесси çинчен каласма чарнă. Анчах апла пулин те, салтаксем хăйсем хушшинче çав темăпа питĕ нумай калаçаççĕ. Германи нумай чăтса тăраймĕ, тесе шутлаççĕ пурте. Юлашки вăхăтра хирти çар сучĕ вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăллă темиçе салтака персе пăрахмалла туса приговор йышăнчĕ».

* * *

Нимĕç ефрейторĕ Фукс нумаях та пулмасть хăйĕн тăванĕсем патне çапла çырнă: «...Эпир юнлă çапăçусем туса пыратпăр. Ĕç пирĕн мăй таранах. Пирĕн чаçа хирĕç вырăссен 500 çынни ытла кĕрешет. Вĕсем—питех те лайăх вĕреннĕ тата чăтăмлă салтаксем. Пиллĕкмĕш талăк ĕнтĕ эпир ура çинче. Хире-хирĕç персе тăрассн пĕр минутăлăха та чарăнмасть. Пур çĕрте те вилнисемпе аманнисем выртаççĕ, анчах вĕсене пуçтарса илме май çук».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ленинград облаçĕнчи Новая ялĕнче Евдокимов колхознике хăйĕн килĕ умĕнче, арăмĕпе виçĕ пĕчĕк ачи куçĕ умĕнчех нумай вăхăт хушши асаплантарнă та кайран çакса вĕлернĕ. Ирсĕр бандитсем çичĕ кун хушши Евдокимов виллине илсе пытарма ирĕк паман. Евдокимовăн арăмĕ ухмаха ерсе кайнă.

* * *

Югослави патриочĕсем оккупантсене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Майăн 16-мĕшĕнче партизансем çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Вагонсен ванчăкĕсем айне пулса, Италин 150 салтакĕ ытла вилнĕ. Крушевац районĕнче оккупантсемпе партизансен отрячĕ хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Партизансем противникăн 165 салтакне тата темиçе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Югослави патриочĕсем хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

Партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

Майăн 23-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула организаци активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ А. МАТВЕЕВ юлташ Чăваш АССР-ĕнчи ĕççыннисен делегацийĕ фронта кайса килни çинчен доклад туса пачĕ.

Матвеев юлташ хăйĕн докладĕнче делегацие фронтра хаваслăн кĕтсе илни, парнесене генерал-майор Кирюхин юлташ командир пулса ертсе пынă дивизие леçсе пани çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Докладчик хăйĕн сăмахĕнче генерал-майор Кирюхин юлташăн дивизийĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç хастарлăн та паттăррăн çапăçса, совет ялĕсемпе хулисене оккупантсен аллинчен ирĕке кăларса пыни çинчен каласа кăтартрĕ. Çак дивизи нумай ялсемпе хуласене, вăл шутра Сухиничи хулине ирĕке кăларассишĕн хастарлăн кĕрешнĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн дивизири боецсене, командирсене тата политработниксене 163 çынна орденсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Каялла чакакан нимĕç ирсĕрĕсем совет ялĕсемпе хулисене вут тивертсе çунтарнисене, мирлĕ халăха асаплантарса вĕлернине, ирĕксĕрлесе Германие илсе кайнине, Хĕрлĕ Çарăн тыткăна лекнĕ воинĕсене çавтери тискеррĕн асаплантарнине пĕлсен, дивизи воинĕсем нимĕç оккупанчĕсене питĕ хытă курайми пулса çитнĕ, вĕсен нимĕçсене тавăрас шухăш-кăмăл вăйланнă. Пирĕн çĕршыв çине оккупантсем пулса килнĕ гитлерла йыткăтĕвĕсене аркатса тăкассишĕн, нимĕç захватчикĕсене, вĕсем тыткăна парăнмаççĕ пулсан, пĕр çын юлмичченех пĕтерсе тăкассишĕн совет воинĕсем паттăррăн, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ.

Фронтпа тыл тачă çыхăнса тăни, çав çыхăну çирĕп пулни гитлерла империалистсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешӳре пысăк вăй пулса тăрать. 1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкма, совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен тасатма тыл Хĕрлĕ Çара пулăшассине татах вăйлатмалла.

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртме пирĕн предприятисен васкавлă заказсене срок çитиччен пурнăçа кĕртме тăрăшмалла. Колхозсен фронтпа çĕршыв валли ытларах та ытларах аш-какай, сĕт-çу, апатçимĕç парса тămалла.

Фронтра тăшмана хирĕç кĕрешекен совет воинĕсем хастарлăн, паттăррăн, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. Тылри ĕççыннисен те фронт заказĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн, çарти пек ĕçлес пулать.

Парти организацийĕсен производство программисене срокченех тата ирттерсе тултарас тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла. Авиаци тата танксен промышленноçĕсенче ĕçлекенсем пуçарса янă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва массăсене нумайрах хутшăнтармалла. Ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурне те пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн ĕçлес пулать.

Доклад тăрăх 7 çын тухса каларĕ.

Генерал-майор Кирюхин юлташăн дивизинче пулса, нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă старши политрук В. ОСИПОВ юлташ тăшмана хирĕç мĕнле çапăçса пыни çинчен каласа кăтартрĕ.

БЕНСКИЙ юлташ майăн 1-мĕшĕ умĕнхи ăмăртура завод задание ăнăçлăн тултарни, Сталин юлташăн приказне пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм Совет Союзĕнче пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çак уйăха панă задание завод коллективĕ майăн 28-мĕшчен тултарма пулни, васкавлă заказсене хăвăрт пурнăçласа пырас тĕлĕшпе завод коллективĕ тимлĕн ĕçлени çинчен каларĕ.

Бенский юлташ заводри инженерсемпе техниксем рационализациллĕ сĕнӳсем парса ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшнине палăртрĕ.

КОНСТАНТИНОВА юлташ, «Водосвет» хулара пысăк вырăн йышăнса тănине палăртса, унăн лайăхрах ĕçлеме кирлине кăтартса парать. Унти хĕрарăмсем пĕр группăна пĕрлешсе çар ĕçне вĕренни, çав группа предприятие хураллас ĕçре охранăна пысăк пулăшу пани çинчен калать.

НИКОЛАЕВА юлташ (4-мĕш номерлĕ шкулăн директорĕ) шкулсенче вĕренекен ачасемпе вĕрентекенсем фронта пулăшас ĕçе активлăн хутшăнни, çар ĕçне вĕренме тăрăшни, хĕрарăмсем кĕпе-йĕмсем çуса госпитальсене пысăк пулăшу пани çинчен калать.

БАРКАН юлташ Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлес ыйту çинче чарăнса тăрать. Тăшман сывлăшран тапăннинчен хуласемпе ялсене хӳтĕлеме ĕççыннисене пурне те вĕрентмелле, светомаскировка тăвассинче çирĕп йĕркелĕх пулмалла.

Хула совет исполкомĕн председателĕ ЗОЛОТНИКОВ юлташ хулари пысăк предприятисем программăна ирттерсе тултарнине, çав вăхăтрах промысла артелĕсем япăх ĕçленине палăртать.

ВКП(б) Шупашкар Хула комитечĕн промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ М. ВОЛКОВ юлташ партин пуçламăш организацийĕсем предприятисен администрацийĕн ĕçĕсене контроль туса тăрас правăна туллин усă курманнине кăтартса парать. Чылай предприятисенче столовăйсем çуккине палăртса, предприятисенче ушкăнпа апатланас ĕçе йĕркелесе яманшăн столовăйсен трестĕн дирекцине критикăлать.

Хула парторганизацийĕн, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII-мĕш конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пырса, предприятисем программăсене тултарассине ĕçе кĕртмелле. Предприятисен коллективĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пур енĕпе те тултарса пырас пулать.

Актив пухăвĕ командир Кирюхин, комиссар Лобачев, командир Щербаков, чаçăн военкомĕ Балашов юлташсем патне тата вĕсен чаçĕнчи боецсемпе командирсем патне саламлă çыру яма йышăнчĕ, çав çырăвăн текстне çирĕплетрĕ.

Пуху пĕрсаслă пулса йышăннă резолюцире парти организацийĕсене ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII-мĕш конференцийĕн решенийĕсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма хушрĕ.

Ĕçне кура— результатсем

ЙĔПРЕÇ, майăн 25-мĕш. (Хамăр корр.). Районри шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Ачасем — учительсене, учительсем—халăха хăйсен çулталăкри ĕçĕсем çинчен отчет параççĕ. Учитель вĕренекенсене çулталăкĕпех тăрăшса вĕрентнĕ çĕрте вĕренекенсем те лайăхрах пĕлеççĕ.

Йĕпреçри вăтам шкулта чăваш чĕлхине вĕрентекен П. Перепелкин ачасене хăйĕн пĕтĕм пĕлĕвне парса вĕрентсе пынă. Çавăнпа унăн предмечĕ тăрăх вĕренекенсем пурте пекех «отлично» тата «хорошо» паллăсем илеççĕ. Сăмахран, 6-мĕшпе 8-мĕш классенче чăваш чĕлхипе диктант çырнă ачасенчен 75 процентĕ «отлично», «хорошо» паллăсем илнĕ, начар паллăсем илнисем çук.

Çак шкултах вырăс чĕлхине вĕрентекен Н. Мурычева преподавательăн те çулталăкри результачĕсем ятламалла мар. 7-мĕш «Б» класс вырăсла çырассипе лайăх паллăсем илнĕ. Çавăн пекех вырăс чĕлхипе пĕлӳ тĕрĕслевĕнче пулнă 7-мĕш «А» класри 27 ачаран «отлично» паллă илнисем — 9, «хорошо» — 12, «посредственно» — 2 пулнă.

Анчах начар результат илекен классем те пур. 9-мĕш класра вĕренекенсем чылайĕшĕ геометрипе алгебрăна начар пĕлни палăрнă.

Т. ИВАНОВ.

Смоленск облаçĕнчи ĕççыннисем оборона фончĕ валли укçа пухаççĕ

СМОЛЕНСК ОБЛАÇĔ, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче тăшман тылĕнчи районсенчен пĕринчен пĕр михĕ хаклă япаласем илсе килнĕ, вăл шутра 332.000 тенкĕ укçа пулнă. Ку япаласемпе укçана фронт линийĕн лешьенче пурăнакан совет гражданĕсем оборона фондне хума тата танксен колоннине тума пухса панă.

Смоленск облаçĕнчи ирĕке кăларнă районсенче нимĕç оккупанчĕсене хăваласа янă хыççăн тепĕр кунхех оборона фончĕ валли укçа пухма тытăннă. Козельск районĕнче пурăнакансем 250.000 тенкĕ, Сухиничи районĕнчи граждансем 200.000 тенкĕ ытларах пухнă.

Тĕрлĕрен районсенчен илнĕ пĕлтерӳсем тăрăх, оборона фончĕ валли тата танксен колоннине тума Смоленск облаçĕнчи халăх пурĕ 2 миллион та 600 пин тенкĕ пухнă.

Оборона фондне хывма 186 гектар акнă

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри чылай колхозсем тĕштырăсем акса пĕтернĕ. Красноярский ячĕллĕ Н. К. Крупская ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксен пуçарăвне йышăнса, оборона фондне хывма тата нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă облаçсемпе районсенчи колхозсене пулăшу пама çураки планĕнчен ирттерсе район 186 гектар тĕштырăсем акса хăварчĕ. Вăл шутра Сталин юлташ ячĕпе тăракан колхоз 15 гектар, «Путь Ленина» колхоз 20 гектар, «Нариман», «Красное знамя», «Осоавиахим» колхозсем 15-шер гектар акнă.

П. С.

Çураки вăхăтĕнчи агитациллĕ ĕç çинчен

Кăçалхи çуракине вăрçă пынă условире ирттермелле пулчĕ. Çавăнпа та кăçал çуракине ăнăçлăн тума, кĕске срокрах тата пысăк пахалăхпа акса çитерме колхозсен мĕнпур ресурсĕсемпе туллин усă курма тиврĕ. Çуракине ăнăçлăн ирттерме уйрăмах колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă агитацие тăтăшах туса пыни нумай пулăшрĕ.

ВКП(б) Октябрьски райкомĕ çураки вăхăтĕнчи агитациллĕ-массăллă ĕçĕн планне тусан, унпа агитколлектив руководителĕсене паллаштарчĕ. Çав план тăрăх ялсенчи агитколлективсем хăйсен ĕç планĕсене туса хатĕрлерĕç. Вара, ака пуçлансан, çав плансене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Районĕпе 25 агитколлектив, вĕсенчи 287 агитатор колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитаци ĕçне туса пычĕç.

Агитаторсем юлашки вăхăтра Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне ĕççынниcем патне çитерес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Ку приказа кашни ялтах, кашни колхозрах, кашни бригадăрах, кашни звенорах ăнлантарса панă. Сталин юлташăн çак приказне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлемелли çинчен 78 доклад туса панă, вĕсенче 5402 çын пулнă, калаçусем ирттернĕ, приказа вуласа панă. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсенчи хыпарсене кашни кунах бригадăсенче, звеносенче каласа кăтартнă.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ колхозниксене тата колхозницăсене хăйсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме хавхалантарчĕ. Районри колхозсем чылайĕшĕ çураки ĕçĕнче пысăк çитĕнÿсем турĕç. Сăмахран, Калинин ячĕпе тăракан колхоз тĕштырăсене 7 кун хушшинче акса пĕтерчĕ, уйрăмах 6-мĕш бригада (бригадирĕ П. К. Шипов) аван ĕçлерĕ. Ку бригадăри колхозниксем кашни кунах ĕç нормисене ирттерсе тултарса пычĕç. Суха тăвакан А. Красильников ĕç нормине ялан 120—130 процент пурнăçа кĕртсе пынă. Сталин ячĕпе тăракан колхозри сухаç Карташов нормăна кашни кунах 150 процент тултарса ĕçленĕ, М. Шиллер—132 процент, С. Яртыганов 139 процент таран тултарнă. Маяковский ячĕпе тăракан колхозăн пĕрремĕш бригади (бригадирĕ М. Новиков) кашни кунах задание 120 процент тултарса ĕçленĕ, сÿре сÿрекен Иван Новиков ĕç нормине 145 процент таран тултарса пынă.

«Красная Чувашия» колхоз тĕштырăсене 6 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Мĕнпур лаптăка пĕтĕмпех яровизациленĕ вăрлăхпа тата машинăпа акнă. Колхозăн 4-мĕш бригади (бригадирĕ Ф. Петров) социализмлă ăмăртура ытти бригадăсенчен мала тухнă, тĕштырăсене 4 кун хушшинчех акса пĕтернĕ. Бригадăри Масаловпа Чупраков колхозниксем суха тунă çĕрте нормăна 150-шар процент тултарса ĕçленĕ. Ку колхозри агитколлективра 7 агитатор. Вĕсем кашни кунах колхозниксем хушшинче калаçусем ирттернĕ, хаçатсем вуласа панă. Çураки вăхăтĕнче пĕтĕмпе 17 номер стена хаçачĕ кăларнă, 13 калаçу ирттернĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхозра агитациллĕ ĕçре комсомолецсем активлăх кăтартнă, вĕсем производствăра та хăйсем пример кăтартса пынă. Пĕрремĕш бригадăна комсомолка З. Воробьева ертсе пынă, бригада пĕр кунлăх заданине 175 процент таран пурнăçа кĕртсе ĕçленĕ. Кунта стена хаçатне 11 номер кăларнă.

Çураки вăхăтĕнче ялсем тăрăх кино кăтартса çÿренĕ, чылай çĕрте вырăнти вăйсемпе спектакльсем лартнă, вечерсем ирттернĕ.

Политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса яни çуракинчи тĕп ĕçсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыма май пачĕ. Агитаторсем, Сталин юлташăн приказне ăнлантарса парса, колхозниксемпе колхозницăсене ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн туса пыма мобилизацилессĕ.

И. ДОЛГОВ.
ВКП(б) Октябрьски райкомĕн секретарĕ.

Ăмăрту вăйланса пырать

ÇĔМĔРЛЕ. (**Телефонпа**). Кубань тавралăхĕнчи трактористкăсем пуçарнă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва Çĕмĕрле МТС-ĕнчи трактористкăсемпе трактористсем активлăн хутшăнчĕç. Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказпа тата партипе правительствăн МТС трактористчĕсене ĕçшĕн хушса тÿлемелле тунă постановленийĕпе хавхаланса, çуракине тухнă кунах трактористкăсем, трактористсем ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç. Кашни трактора пĕр чарăнусăр ĕçлеттерес, вăл мĕн чухлĕ ĕçлеме пултарнипе йăлтах усă курас, çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне ăнăçлăн пурнăçлас шухăшпа тытăнчĕç ĕçе чылай трактористсем, трактористкăсем.

Ĕçĕн тухăçлăхĕ кунран кун ÿссех пырать. Чуркин юлташ ертсе пыракан бригада çурхи ĕçсен планне 177 процент тултарнă. Бригада ăмăртура малти ретре тăрать. Ун хыççăн Данилов юлташ ертсе пыракан бригада пырать. Унăн бригади çурхи ĕçсен планне 106 процент тултарнă.

Уйрăм трактористсем, пысăк пахалăхпа ĕçлесе, çак кунсенче уйхир ĕçĕнчи стахановец-трехсотниксем пулса тăчĕç. Тракторист Федотов юлташ хăйĕн тракторĕпе çуракинче план тăрăх 65 гектар сухаламалла. Вăл паянхи куна 185 гектар сухаланă. Çак кунсенче Федотов юлташ пĕр смена хушшинче газогенераторлă тракторпа 11 гектар сухаларĕ, ĕç нормине 237 процент тултарчĕ.

Ытти трактористсем те Федотов юлташран юлса пымаççĕ. Семенов юлташ çуракине тухнăранпа газогенераторлă тракторпа 140 гектар сухаланă, çамрăк трактористкăсем Чалбаева 77 гектар, Уфилькина — 72 гектар сухаланă. Чалбаева юлташ сменăра 7 гектар çурă сухаланă, тракторист Мизюков юлташ 9 гектар сухаланă.

Х. ЛИСИН.

Стена хаçачĕ 16 номер тухнă

СОВЕТСКОЕ. «Бархотино» колхозри «Колхозник» ятлă стена хаçачĕ колхоз производствинче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсем пуçланнăранпа стена хаçачĕ 16 хут тухнă. Хаçат колхозниксене ĕçе мобилизацилет, ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра палăртса критикăлать. Хаçат çине 10 колхозник активлăн çырса тăраççĕ.

Н. ПАХОМОВ.

Ясли заведующийĕсен курсĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Çак кунсенче районри сывлăха сыхлав пайĕ организациленĕ ясли заведующийĕсем вĕрентсе кăларакан курс хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Курсра пурĕ 10 хĕрарăм вĕренчĕ, вĕсенчен 9 çын «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухрĕç.

Комбайнерсен курсĕ уçăлчĕ

КÿКЕÇ, майăн 21-мĕш. (**Телефонпа**). Шупашкар районĕнчи машинно-тракторнăй станци çумĕнче комбайнерсен помощникĕсем, трактор молотилкипе ĕçлекенсем тата тырă выракан машинăсемпе ĕçлекенсем вĕрентсе хатĕрлекен курс уçăлчĕ. Курса 18 çын пухăннă. Вĕсем вĕреннĕ хушăрах комбайнсемпе молотилкăсене юсаса пыраççĕ.

Н. КОНДАКОВ.

Çамрăк выльăхсемшĕн тăрăшнă çĕрте

КАЛИНИНО. Шнакассинчи «Броневик» колхозра кăçал 4 кĕсре хăмланă. Тихасем пурте сывлăхлă тата хăвăрт хушăнса пыраççĕ. А. Родионов, С. Иванов конюхĕсем тихаллă кĕсресене уйрăм вырăна хупаççĕ, уйрăмах лайăх пăхса тăрантараççĕ.

И. ДЕНИСОВ.

Рузвельт заявленийĕ

ВАШИНГТОН, майăн 22-мĕш. (ТАСС). Майăн 22-мĕшĕнче суту-илÿ флочĕн кунне уявланă май, Рузвельт çапла каланă: кăçалхи çул çак куна уявлани Америкăшăн ытти çулсенчи пек мар пысăк вырăн йышăнса тăрать, тенĕ.

«Пирĕн çĕршывăн историйĕнче, — тенĕ Рузвельт,—пирĕн судоверфьсен ĕçĕ, пирĕн суту-илÿ суднисен ĕçĕ нихăçан та хальхи пек пысăк вырăн йышăнса тăман. Эпир халĕ туса пыракан вăрçă чылай енчен тинĕс транспорчĕн вăрçи пулса тăрать. Пирĕн çутçанталăкăн пур кĕтессисене те хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсемпе хамăрăн союзниксем валли çынсемпе хĕçпăшалсем тăратма тивет.

Пĕр çулталăк ытла каярах эпир хамăрăн пысăк программăна пурнăçа кĕртме тытăнтăмăр. Суту-илÿ флочĕ енĕпе çакăн пек пысăк задачăна пурнăçа кĕртме ытти нихăш çĕршывсем те тытăнса пăхман-ха. Эпир çак задачăна пурнăçа кĕртесси пирки хăшпĕрисем иккĕленетчĕç. Халĕ эпĕ сире суднăсем тăвас ĕçре эпир тĕлĕнмелле вăйлăн ĕçленине çирĕплетсех калама пултаратăп. Америкăри суднăсем тăвакан промышленноçăн хăвачĕ 500 процент ытла ÿсрĕ. Çак факт хăех ĕнтĕ çавтери пысăк çитĕнÿ пулса тăрать.

Вăрçă туса пыма кирлĕ япаласене илсе çÿреме пирĕн суднăсем çителĕксĕр пулнă, вĕсем халĕ те çителĕксĕр-ха. Противникăн подводнăй лодкисем пире пысăк çухатусем тÿстерчĕç. Анчах пирĕн умра тăракан ытти задачăсем пекех, эпир çак задачăна та халĕ татса паратпăр. Пирĕн суднăсем кирлĕ вырăна çитессĕ тата вĕсем унта нумайрах та нумайрах пырса тăрĕç».

Рузвельт юлашкинчен Америкăри офицерсемпе матроссен паттăр ĕçне палăртса хăварнă.

Фордăн çĕнĕ завочĕ

НЬЮ-ИОРК, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Хаçат представителĕсем фордăн бомбардировщиксем тăвакан çĕнĕ заводне кĕрсе курнă. Майăн 21-мĕшĕнче çак заводра «Консолидейтед Б-24» текен чи пысăк йышши малтанхи бомбардировщике пуçтарса кăларнă. «Нью-Йорк Таймс» хаçат корреспонденчĕ çырнă тăрăх, Фордăн бомбардировщиксем тăвакан завочĕ «çавтери пысăк, вăл хула пекех сарăлса ларать». Халĕ завод туса лартнă вырăнта 13 уйăх каялла соя йышши пăрçасем ÿссе ларакан хир пулнă.

Завод пĕтĕмĕшпех ĕçлеме пуçласан, кашни сехетре пĕр бомбардировщик туса кăлармалла.

ИТАЛИ ХУÇАЛĂХĔ ЯПĂХНИ

СТАМБУЛ, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Итали хаçачĕсем çырнă тăрăх, Италире металл таврашĕ çитменни ытларах та ытларах палăрма тытăнать. Металл ванчăкĕсене таççанах пухса пĕтернĕ. Май уйăхĕн пуçламĕшĕнче Итали правительстви халăха килçуртри тимĕр-тăмăра — ваннăсене, алăк хăлăпĕсене тата ыттисене те йăлтах государствăна пама хушнă.

Пĕтĕм Италийĕпех электроэнерги парса тăрас виçене чакарнă. Хальхи вăхăтра фашистла влаçсем хресченсен кăçал вырнă тыррине тытса илес пирки пĕтĕм хаярлăхпа ĕçлеççĕ. Майăн 10-мĕшĕнче правительствăн çĕнĕ декречĕ пичетленсе тухнă. Ку декрет тăрăх кăçалхи тырра хресченсен вунă кунлă срок хушшинче государствăна парса пĕтермелле. Хресченсен хăйсен алллине выçăллă-тутăллă пурăнмалăх çеç хăвармалла. Тырра срокра памасăр кăшт кăна кая юлнăшăн та хыттăн айăпламалла тунă.

Тырра пытарса хăварнăшăн нумай хресченсене суд тăваççĕ, çавах та хресченсем хăйсен продукцине государствăна парассине хирĕç тăма пăрахмаççĕ.

Гитлерла пуçлăхсем хăраса ÿкнĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, майăн 20-мĕшĕнче Геринг сăмах каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Германи çарĕ хĕлле Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра питех те пысăк йывăрлăхсем тÿснине йышăннă. Геринг çакна та йышăннă: Хĕрлĕ Çар Германи çарне пыра-пыра çапнине пула, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри обстановка «çавтери йывăрланса çитнĕ». Хăйĕн сăмахĕн чылай пысăк пайĕнче Геринг Германин шалти пурнăçĕ çинчен каланă. Апат-çимĕç нормине татах пĕчĕклетни çинчен пĕлтерсе, вăл нимĕç халăхне çĕнĕ жертвăсем тума чĕннĕ, «нимĕçсен, паллах, нумай тÿсме тивет», çак требованисем темле йывăр пулсан та, вĕсене пурнăçа кĕртессине хирĕç тăмалла мар, тенĕ вăл.

Герингăн пĕтĕм сăмахĕ çакăн пек хурлăхлă хыпарсемпе тулса ларнă.

Германин çĕрĕç министрне Даррене ĕçрен кăларни

ЖЕНЕВА, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Германин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин продовольствипе çĕр ĕçĕн министрне Даррене «сывлăх начар пулнă пирки нумай вăхăтлăха отпуск» панă. Гитлер ун вырăнне Герберт Беке тĕпекенскере лартнă.

Вырăнти журналистсем çапла шутлаççĕ: паллă гитлеровеца Даррене «вăрăм вăхăтлăха отпуска яни», тепĕр майлă каласан, ăна ĕçрен кăларни Германире продовольстви тĕлĕшпе пурнăç питех те йывăр пулнинчен тата унти ялхуçалăхĕ катастрофа тÿснинчен килнĕ (Дарре фашистсен Гитлера çывăх тăракан пуçлăхĕсенчен пĕри пулнă, 1933 çултан пуçласа пĕр улшăнмасăр продовольствипе çĕрĕç министрĕн постне йышăнса тăнă). Хальхи вăхăтра Германире продовольстви нормисене татах пĕчĕклетме хатĕрленеççĕ. Ялхуçалăхĕнчи йывăрлăхсем ÿссех пыраççĕ.

Германин нумай районĕсенче уйхирсем акăнмасăр юлнă, мĕншĕн тесен кĕртырисем шăтмасăр пĕтсе ларнă. Ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ тата вăрлăхсемпе удобренисем çитмен пирки чылай вырăнсенче çураки тăвайман. Гитлерла хаçат «Ланд пост» Германин ялхуçалăхĕ юхăнса пынине тата Германи умĕнче выçлăх хăрушлăхĕ тăнине юлашки вăхăтра пĕрре кăна мар йышăннă. Катастрофăна сирсе ярас тесе, хаçат васкавлă мерăсем йышăнма ыйтнă. Германи халăхĕ ытларах та ытларах тăрăхса пырать, мĕншĕн тесен вăл тÿсекен йывăрлăхсем кашни кунах ÿссе пыраççĕ.

Женевăри журналистсем палăртнă тăрăх, Даррене «нумай вăхăтлăха отпуска яни» «Браухич чирĕпе» пĕр пекех. Даррене айăпласа, Германири йывăр пурнăçшăн Гитлер ответлăха хăй çинчен сирме хăтланать.

ЧЕХ ПАРТИЗАНĔСЕН КĔРЕШĔВĔ

ЛОНДОН, майăн 22-мĕш. (ТАСС). Кладно районĕнчи чăтлăх вăрмансенче чех партизанĕсем пытанса çÿреççĕ, вĕсем Германин çар машинине хирĕç саботажла ĕçсем тăваççĕ. Нумаях пулмасть динамит пытарса хунă чух шахтерсемпе нимĕç полицейскийĕсем хушшинче тытăçу пулса иртнĕ. Çав тытăçура пĕр полицейски сержанта тата пĕр шахтера вĕлернĕ.

Итали Корсикăна, Ниццăна тата Туниса тытса илме хатĕрленет

АНКАРА, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Анатоли агентстви пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Итали хаçачĕсем Муссолини Корсикăна тытса илме хатĕрленни çинчен пĕр пытармасăрах çырма тытăннă. Хаçатсем çырнă тăрăх, Муссолини нумай пулмасть Сардини утравĕ çине Корсикăна тытса илме хатĕрлес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслеме кайса килнĕ. «Джорнале д'Италиа» хаçатăн ĕнерхи номерĕнче «фашистсен аслă совечĕ пысăк решенисем йышăнасси» çинчен çырнă. Çакăнпа пĕрлех çак хаçат Виши правительстви умне Корсикăна, Ниццăна тата Туниса Италие пама ыйту лартасси çинчен те систерет.

Крит утравĕ çинчи партизансем

ЛОНДОН, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Крит утравĕ çинче партизанла кĕрешÿ сарăлать. Нимĕç гарнизонĕсем, партизансем тапăнасран сыхланса, Крит утравĕ çинчи портсене тата стратегиллĕ пунктсене хураллас ĕçе вăйлатаççĕ. Партизансенчен хăранипе нимĕçсем утрав варринче ларакан пунктсене сайрахутра çеç кĕме хăяççĕ.

Виши правительствин самолечĕ Англин вĕçекен кимми çине тапăнни

ЛОНДОН, майăн 22-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: майăн 18-мĕшĕнче Алжир çыранĕнчен 20 мильăра Виши правительствин сывлăшри вăйĕсен истребителĕ Англин «Каталина» ятлă вĕçекен лодкине атакăланă, вара çав лодкăн ирĕксĕр анса лармалла пулнă. «Каталинăн» экипажне (унăн икĕ членĕ аманнă пулнă) Англин судни çине илнĕ.

Рейтер агентствин дипломатиллĕ обозревателĕ Вишире официальнăй йĕркепе пĕлтерни çинчен каласа (çав пĕлтерÿре Англин вĕçекен лодки Алжир территорине кĕрекен шыв çинче вĕçсе çÿренĕ тесе пĕлтернĕ), çакна кăтартса парать: çав вĕçекен лодка çине вăл çыранран 20 мильăра вĕçнине пăхмасăрах тапăннă. Çак факт вăл Вишири влаçсем Англи тĕлĕшпе провокациллĕ тата тăшманла ĕç тăвас тесе тата нимĕçсене кăмăла каяс тесе çапла тунине пĕлтерет, тет.

Колхоз сметине тĕрĕс пурнăçласеншĕн

ИШЛЕЙ. Ялхуçалăх артелĕн уставне тĕрĕс пурнăçласа пырас ĕçре колхозсен ревизи комиссийĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Колхозăн пурлăхне сыхлас тĕлĕшпе вăл правленине тахах ответлă пулса тăрать. Хальхи вăхăтра уйрăмах колхоз председателĕне колхозăн ревизи комиссийĕ умĕнче пысăк ĕçсем тăраççĕ. Колхозăн сметине приход енĕпе уставăн пур статьисем тăрăх та тултарса, тĕрĕс, смета тăрăх расходламалла. Çакна нумай колхозсенчи ревизи комиссийĕсем тивĕçлипе сăнаса, тĕрĕслесе пымаççĕ-ха.

Тĕслĕхрен, колхозран кивçенне укçа илсен, устав тăрăх ăна пĕр çул хушшинче тавăрса памалла. Анчах Ишлейри Сталин ячĕпе тăракан колхозра çак йĕркене пăсаççĕ. П. Степанов колхозран такçанах 500 тенкĕ укçа илнĕ. Анчах вăл ăна тавăрса паман, колхозăн ревизи комиссийĕ кăна паллă туса хуман.

Колхозăн укçа-тенкине салатса яракансене хирĕç те ревизи комиссийĕ кирлĕ пек кĕрешмест. Бухгалтер пулса ĕçленĕ М. Волков иртнĕ çулта 8.000 тенкĕ растрата тунă. Анчах колхоз правленийĕ паян кун та ку тĕлĕшпе нимĕнле мера та йышăнман.

Çакăн пек çитменлĕхсене пĕтермелле. Çак ыйтупа ялсовет исполкомĕсен те интересленмелле.

Т. ВАСИЛЬЕВ.

Хăмла лартма хатĕрленеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Ударник» колхоз кăçал хăмла вырăнĕнчен нихăçанхинчен те пысăкрах тухăç илме ĕмĕтленет. Хăмла лартса ÿстерекен колхозниксем хăйсен ĕçне хĕрÿллĕн тытăнчĕç. Ларса юлнă шалчасене кăлараççĕ, хăмла вырăнне тасатса çĕнĕрен çемçетеççĕ. Çак çитес кунсенчех хăмла çеçкисене шалчасем çумне çĕклесе çыхма тытăнаççĕ.

Ф. МЕДЯКОВ.

ФИНАНС ПЛАННЕ ĂНĂÇЛĂН ТУЛТАРАÇÇĔ

ИШЛЕЙ. (**Телефон тăрăх**). Укçа-тенкĕ пухмалли иккĕмĕш кварталти плана район çурринe ытла пурнăçа кĕртнĕ. Уйрăмах çак ĕçпе Мамăш ялсовечĕ малта пырать, унти финагент комсомолка Серафима Смирнова тăрăшса ĕçлет, çавна пула ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухас плана 132 процент тултарнă. Налог агенчĕ Хлебников юлташ Ярапайкасси ялсоветĕнче укçа-тенкĕ пухас плана 102 процент пурнăçланă.

Районри ĕççыннисем военнăй налога васкавлăн парса татма тăрăшаççĕ. Çав налога пухмалли çулталăкри плана районра тултарнă.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç Алинăра тата Чаканар ялсоветĕнче япăх пырать. Унти налог агенчĕ В. Кикашова канцелярийĕнче ытларах ларать, халăх хушшине сахал тухса çÿрет, ялти активпа çыхăнса ĕçлемест.

З. МИТРОФАНОВА.

—○—

ЧГАТ гастролĕсем

Чăвашсен Академиллĕ Театрĕ майăн 27-мĕшĕнче республикăн районĕсем тăрăх гастроле тухса каять. Театрăн репертуарĕнче Мдивани çырнă «Приказ по фронту», Чăваш халăхĕн поэчĕн С. В. Эльгерăн «Хĕнхур айĕнче» поэми тăрăх Трофимов çырнă «Чакка» драма, Айзман тата М. Кошкинский юлташсем çырнă «Улăпсем» пьеса пулать.

«Приказ по фронту» пьесăра Серго Орджоникидзе ролĕнче Чăвашсен тава тивĕçлĕ артисчĕ П. О. Молодов юлташ вылять.

«Улăпсем» пьеса нимĕç захватчикĕсен тылĕнче вырăс халăхĕпе пĕрле чăвашсем те фашистсене хирĕç паттăррăн кĕрешнине кăтартса парать.

Гастроле пурĕ 35 çын каяççĕ. Вĕсем хушшинче РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. А. Алексеев, ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем: П. О. Молодов, О. П. Ырзем, ЧАССР искусствин тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. С. Айзман юлташсем пулаççĕ.

Театр июнь тата июль уйăхĕсем хушшинче Комсомольски, Елчĕк, Чкаловски, Шăмăршă, Первомайски районĕсенче пулать.

Л. РОДИОНОВ.
Чăвашсен Академиллĕ Театрĕн художествăллă руководителĕ.

—○—

Пĕлтерÿ

Майăн 27-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Советсен Çуртĕн залĕнче **Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен** лекци пулать.

Лекцие Юлин юлташ вулать.

Билетсене ВКП(б) хула комитетĕнче (123-мĕш пÿлĕмре) илмелле.

ВКП(б) хула комитечĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Ăмăртса ĕçлекен районсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, майăн 25-мĕш. (**Хамăр корр., телефонпа**). Çуракин малтанхи кунĕсенче тунă йăнăшсене хăвăрт тÿрлетсе, районри пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене вăтамран ялсен 8—9 кун хушшинче акса çитернĕ. Тĕштырăсем акас плана ăнăçлăн пурнăçланă хыççăн районри колхозсем тăвăн çĕршыв оборони фондне сыпма тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке тухнă районсенчи колхозсене тĕвалла пулăшу пама 185 гектар тĕштырă акнă. Колхозсенче халĕ техникăлла культурăсем акас, çĕрулми тата пахча çимĕç лартас ĕçсем пысăк çĕкленÿпе пулса пыраççĕ.

Паянхи куна районра çĕрулмине 600 гектар ытла лартнă. Сталин, Ворошилов ячĕсемпе тăракан, «РОКК», «Красный Октябрь», «Хĕрлĕ Тан», «Ырлăх» тата ытти нумай колхозсем çураки планне пур культурăсем енĕпе те пурнăçланă.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнче панă приказĕ çураки ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнчĕ. Вăл приказ колхозниксене тăвăн çĕршыва, Хĕрлĕ Çара кирлĕ чуллех тырпул, апат-çимĕç тата ялхуçалăхĕнчи ытти продуктсене туса пама хавхалантарчĕ. Çулталăкăн сăмахне ялавах асра тытса, колхозниксемпе колхозницăсем çуракинчи фронтри пек ĕçлерĕç. Уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе ĕçлĕн усă курчĕç.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз (Ахпÿрт ялсовечĕ) ирхи культурăсене 6 кун сурĕ хушшинче, çуракинче акмалли пĕтĕм культурăсене вунă кун хушшинче акса пĕтернĕ. Колхоз çураки планĕнчен ирттерсе 10 гектар тулă, 5 гектар сĕлĕ акрĕ. Çак çĕр лаптăкĕсенче акнă тырра колхозниксем нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсене ярса параççĕ тата çĕршывăн оборона фондне хураççĕ. Ку колхоз иртнĕ çулсенче кая юлса пынă. Çуракине тухиччен кăшт маларах çак колхоза ертсе пыма коммунистка Капитанова юлташа тăнă. Капитанова юлташ ертсе пынипе колхозри агитаторсем колхозниксемпе колхозницăсене партипе правительствăн постановленийĕсене, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн В. М. Молотов юлташăн нотине ăнлантарса пачĕç. Колхозниксен ĕçри дисциплинине çирĕплетнĕ, агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатнă.

Сталин юлташăн приказне сÿтсе-явнă хыççăн А. Кудинов юлташăн бригадинчи колхозниксем тĕштырăсене çичĕ кун хушшинче, пĕтĕм культурăсене 9 кун хушшинче пысăк пахалăхпа акса хăварма обязательство илнĕ. Ку обязательствăна вĕсем срокчченех пурнăçланă. Пур йышши тырăсене те бригада çичĕ кун хушшинче акса пĕтернĕ. Çавăн пекех «Красный Октябрь» колхоз та (председателĕ Булатов юлташ) тĕштырăсене 6 кун хушшинче, çуракине пĕтĕмпе 9 кун хушшинче ăнăçлăн вĕçленĕ.

Чкаловски районри колхозсем кăçал Шăмăршă районĕнчи колхозсемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Шăмăршă районĕ çуракинче кая юлса пынине шута илсе, унти колхозсене ĕçре социализмлă пулăшу парас шутпа, районри колхозсем вĕсене çуракинче ĕçлеме 60 лаша тата икĕ касăллă 30 плуг пама йышăнчĕç.

Тăшманăн вучĕпе чăрмавĕсем витĕр

ХАРЬКОВ ЕНĔ, майăн 22-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Нимĕçсен фашистла войскисен нумай атакисене сирпĕтсе ярса, пирĕн чаçсем хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ. Иртнĕ талăк хушшинче тăшман чылай çĕрте хăйĕн лайăх рубежĕсене хăварса каялла чакрĕ.

Эпир наступлени тума пултарас вырăнсене нимĕçсем комбинированнăй минăсем лартса тултарнă: рет-речĕпе танксене хирĕç кĕрешмелли минăсем, рет-речĕпе пехотăна хирĕç кĕрешмелли минăсем ылмаштарса лартса тухнă. Укрепленнăй линисене тунă хыççăн фашистсем хăйсене нимĕн каçса кĕреймен стена хыçĕнче ларнă пекех туйнă. Наступлени пуçланичченех, фашистсен укрепленийĕ пирĕн авиацине тинĕçĕрти войскăсем вăрлĕн çапнипе ишĕлсе анма тытăннă. Пирĕн паттăр воинсем, çĕнĕрен йышăннă рубежсенче хăвăрт та меллĕн çирĕпленсе ларса, тăшмана çине тăрсах çапăçăва туртса кĕртеççĕ, ăна çара уйра нимĕçсене укрепленине те хÿтĕлемен вырăнсенче çапăçмалла тăваççĕ. Çавăн пек çапăçусенчен пĕринче ĕнер нимĕçсен 850 салтакпа офицер вилсе тăкăнса юлчĕ. Танксене хирĕç кĕрешекен орудисен тата полевой артиллерин вучĕпе тăшманăн 4 вăтам танкне тата 3 çăмăл танкне пĕтерсе тăкнă. Фашистсем хăйсен войскин операцийĕсене сывлăшран хÿтĕлеме пăхрĕç, анчах та пирĕн истребительсене хирĕç пулнă пирки нимĕç самолечĕсем каялла çавăрăнса кайрĕç. Вĕсен 3 самолетне пирĕн летчиксем персе антарчĕç.

Харьков енчи çапăçусенче пирĕн войскăсен тĕрлĕ чаçĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăрса пĕрне-пĕри пулăшаççĕ. Саперсем тăшман вучĕ айĕнчех вăрçă уйĕсене минăсенчен тасатаççĕ, танксем валли çул уçаççĕ. Минăран тасатнă ансăр вырăнсенче танксем вăркăнса кĕреççĕ, вĕсем хыççăн пехота пырать. Сывлăшра пĕр чарăнмасăр авиаци çапăçать. Йывăр орудисемпе инçете перекен артиллери вĕрлесе тăраççĕ.

Тăшмана хирĕç пирĕн танкистсем малтанхи пекех хăюллăн та хĕрÿллĕн çапăçаççĕ. Виçĕ хут орден илнĕ кĕçĕн лейтенант Шматько экипажĕ, противник хыçне хăюллăн кĕрсе кайса, танксене хирĕç кĕрешекен пĕр батарейăна тата 20 салтакпа офицера пĕтерсе тăкнă.

Паян ирхине Н-ски чаçăн танкисчĕсем, нимĕçсен контратакине сирсе ярса, тăшманăн çичĕ машинине вут тивертсе янă. Чакакан тăшмана хыçран йĕрлесе кайса, вĕсем пĕр ял патĕнче нимĕçсен пĕр батарейине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă тата икĕ противотанковăй орудине тытса илнĕ. Çак кунсенче çĕнĕ снайперсем палăрса чапа тухрĕç. Снайпер-красноармеец Оконк юлташ 12 хут персе фашистсен 10 салтакне вĕлернĕ, 2 салтакне суранлатнă. Романченко боец снайпер винтовкинчен персе 60 оккупанта яхăн ÿкернĕ.

Пирĕн разведчиксен ушкăнĕ чаплă ĕç тунă. Старшина Гончаров, старши сержант Стригин, кĕçĕн сержант Волобуев, красноармеец Коровин, разведкăна кайсан нимĕçсен позицийĕ патне шуса çывхарнă та, тăшманăн мĕн хăтланнисене кунĕпех вăртăн пăхса выртнă тата çак хушăрах вĕсем хамăр артиллерине условнăй паллăсемпе ăçта перселли тĕллесе кăтартса тăнă. Каçхине çак тăватă маттур боец тăшманăн оборони патне çывăхрах пынă, кунтан вĕсем нимĕçсен кăнтăрла курса асăрханă огневой точкисене тĕлле-тĕлле персе йăлтах пĕтерсе тăкнă.

Харьков енчи çапăçу ытларах та ытларах хĕрсе пырать. Нимĕçсем тыткăна парăнасси йышлăланать. 294-мĕш дивизири 513-мĕш полкăн обер-ефрейторĕ пулнă Пауль Вагнер, тыткăна лекнĕскер, çапла каласа парать:

«Темиçе кун вăрçăсенче пулнă хыççăн пирĕн ротăри 120 салтакран 40 çын çеç юлчĕ. Пирĕн çине артиллери çавтери вăйлăн персе тăчĕ, нумай вăхăт хушши никам та пуçне йăтса пăхма та пултараймарĕ. Пуçсене йăтса пăхсанах эпир вырăссен танкĕсем пынине куртăмăр. Хирĕç тăрсан та усси пулас çукчĕ, çавăнпа эпир тыткăна парăнтăмăр».

З. ЛИПАВСКИЙ.

ЧУВАШМЕТРОВЕСУ ТРЕБУЕТСЯ счетовод. Одиночки обеспечиваются жилплощадью. Адрес: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 45

ПРИНИМАЮТСЯ В РЕМОНТ примуса и бытовая металлическая посуда. Обращаться в мастерскую Горпромкомбината: ул. Плеханова, д. № 28. 2—2

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НБ 599 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 [illegible]